24-мӗш çул тухать. Хакӗ 15 пус.

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1942
ФЕВРАЛЬ
22
ВЫРСАРНИКУН
45 (6070) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖ, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖ ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАÇАЧӖ.

Хӗрлӗ Çар 24 çул тултарнă тӗле кăларнă лозунгсем

1. Пирӗн Тăван çӗршывăн чыслăхне, ирӗклӗхне, никама пăхăнманлăхне нимӗçсен фашистла захватчикӗсенчен паттăррăн хӳтӗлекен Хӗрлӗ Çар 24 çул тултарни сывă пултăр!

Хӗрлӗ Çар 24 çул тултарнине тăшмана хирӗç кӗрешсе çӗнӗ çӗнтерӳсем тунипе палăртар!

2. Отечественнăй вăрçăра пире аслă Ленинăн сăнарӗпе унăн çӗнтерӳллӗ ялавӗ хавхалантарса пыраççӗ.

Ленин — Сталин ялавӗпе, çӗнтерӳ патне, малалла!

3. Отечественнăй Аслă вăрçăн геройӗсене — пирӗн тăван çӗршывăн чыслăхне, ирӗклӗхне, никама пăхăнманлăхне паттăррăн хӳтӗлекен боецсене, командирсемпе политработниксене мухтав!

4. Советăн тăван çӗршывӗшӗн Совет Союзӗнчи пур халăхсен ывăлӗсем те çапăçăва каяççӗ.

Хӗрлӗ Çар — халăхсен тăванлăхӗпе туслăхӗн çарӗ сывă пултăр!

5. Германи фашизмӗ чуралантарнă пур халăхсене те ирӗклӗх кӳрекен Хӗрлӗ Çар сывă пултăр!

6. Хӗрлӗ Çарпа Тинӗс-Çар Флочӗн боецӗсем, командирӗсемпе политработникӗсем! Тăван çӗршыва нимӗçсен фашистла мерзавецӗсенчен тасатăр! Нимӗç оккупанчӗсене—вилӗм!

7. Юлташсем — красноармеецсемпе краснофлотецсем, командирсем, политработниксем, партизансемпе партизанкăсем! Сирӗн çине халăхсене ирӗке кăларас аслă мисси ӳкрӗ. Çав миссие пурнăçа кӗртме тивӗçлӗ пулăр—нимӗç захватчикӗсен кӗтӗвӗсене нимӗн хӗрхенӳсӗр пӗтерсе пырăр!

8. Хӗрлӗ Çарăн мухтавлă воинӗсем! Нимӗçсен фашистла йыткӗтӗвӗсене хӗвеланăç еннелле хăвалăр! Нимӗçсем çӗнӗ рубежсенче çирӗпленсе ларма хăтланнине аркатса пырăр. Тăшманăн чӗрӗ вăйӗпе техникине аркатăр.

9. Хӗрлӗ Çарăн воинӗсем! Сире нимӗçсен фашистла пусмăрӗ айӗнче асапланса пурăнакан миллионшар совет çыннисем кӗтеççӗ.

Хӗвеланăç енне малалла, Совет çӗршывне ирӗке кăларма!

10. Пирӗн хуласемпе ялсене çаратса юхăнтарнăшăн, хӗрарăмсемпе ачапăчасене пусмăрланăшăн нимӗçсен фашистла мерзавецӗсене тавăрар! Юншăн юн! Вилӗмшӗн вилӗм!

11. Совет летчикӗсем! Пирӗн тăван çӗршывăн соколӗсем пулăр! Тăшмана сывлăшра та, çӗр çинче те аркатăр!

Сывă пулччăр Совет летчикӗсем!

12. Хӗрлӗ Çарăн танкисчӗсем! Тăшмана хăюллăн пӗтерсе пырăр! Пирӗн тăван çӗршыва нимӗç захватчикӗсенчен ирӗке кăларăр!

Сывă пулччăр совет танкисчӗсем!

13. Хӗрлӗ Çарăн артиллерисчӗсем! Тăшманăн çирӗплетнӗ çулӗсемпе хирӗç тăмалли пункчӗсене аркатăр! Тăшманăн чӗрӗ вăйӗпе техникине пӗтерӗр!

Сывă пулччăр совет артиллерисчӗсем!

14. Хӗрлӗ Çарăн пехотинецӗсем! Тăшмана хăваласа пырса, ăна хăйӗн полкӗсене вут-çулăм айӗнчен илсе тухма ан парăр! Нимӗç захватчикӗсене хупăрласа тыткăна илӗр, тыткăна парăнмаççӗ пулсан,—вӗсене пӗтерсе тăкăр!

Сывă пулччăр совет пехотинецӗсем!

15. Хӗрлӗ Çарăн кавалерисчӗсем! Тăшман войскисен ăшне хăюллă та паттăррăн çӗмӗрсе кӗрӗр, вӗсене хӗвеланăç еннелле ывăна пӗлмесӗр хăвалăр!

Сывă пултăр советăн утлă çарӗ!

16. Хӗрлӗ Çарăн автоматчикӗсем! Нимӗçсен фашистла вăрă-хурахӗсене хытăрах çапăр! Тăшман çине автоматсенчен вут-çулăм сапăр! Нимӗçсене кăнтăрла та, çӗрле те канăç ан парăр!

Сывă пулччăр совет автоматчикӗсем!

17. Хӗрлӗ Çарăн минометчикӗсем! Тăшмана аркатмашкăн минометсемпе анлăнрах усă курăр! Тăшмана минăсем айне тăвăр!

Сывă пулччăр совет минометчикӗсем!

18. Хӗрлӗ Çарăн разведчикӗсем! Нимӗçсен тылӗнче хăюллă кӗрешӗр! Тăшман шухăшӗсене, вăл мӗн тума хăтланнине тӗпчесе пӗлӗр!

Сывă пулччăр хăрама пӗлмен совет разведчикӗсем!

19. Хӗрлӗ Çарăн связисчӗсем! Лайăх çыхăну тăшмана çӗнтерес ӗçӗн условийӗ пулса тăнине асра тытăр! Хӗрлӗ Çарăн çыхăнăвне пур майсемпе те çирӗплетсе пырăр! Сывă пулччăр совет связисчӗсем!

20. Хӗрлӗ Çарăн йӗлтӗрçисем! Тăшманăн тылне кӗрсе кайăр, унăн çулӗсене тытса илӗр, тăшмана флангсенчен тата тылран пыра-пыра çапăр, унăн техникипе чӗрӗ вăйне аркатăр, пӗтерсе тăкăр!

Сывă пулччăр совет йӗлтӗрçисем!

21. Сывă пулччăр пирӗн мухтавлă пограничниксем, совет çӗршывӗн чиккисене шанчăклăн хӳтӗлекенсем!

22. Хӗрлӗ Çарăн медицина работникӗсем! Врачсем, медсестрасем, санитарсем! Советăн аманнă боецӗсен пурнăçӗ сирӗн хăюллă та чаплă ӗçӗртен килнине асра тытăр!

Хӗрлӗ Çарăн медицина работникӗсем сывă пулччăр!

23. Хӗрлӗ Çарăн гвардеецӗсем! Гвардин мухтавлă ялавӗсене чыслăн тытса пырăр! Тăшмана хирӗç кӗрешес ӗçре яланах хăюлăхпа хастарлăхăн примерне кăтартса парăр!

Хӗрлӗ Çарăн мухтавӗ — Совет гвардийӗ—сывă пултăр!

24. Нимӗç захватчикӗсене çӗнтерме хамăр войскăсене ертсе пыракан пирӗн мухтавлă генералсем сывă пулччăр!

25. Пирӗн Тăван çӗршывăн мухтавӗшӗн боецсемпе командирсене паттăрла ӗçсем тума хавхалантаракан Хӗрлӗ Çарăн çар комиссарӗсем сывă пулччăр!

26. Совет Союзӗн, Великобританин тата ытти çӗршывсен союзӗ сывă пултăр, нимӗçсемпе итальянецсен вăрă-хурахла империализмне хирӗç кӗрешекен, ирӗклӗхе юратакан халăхсен çарӗсемпе флочӗсен боевой союзӗ сывă пултăр!

27. Партизансемпе партизанкăсем! Сире — нимӗç оккупанчӗсене хирӗç пыракан халăх вăрçин геройӗсене — мухтав та чыс! Халăхшăн кӗрешекенсем — советăн хăюллă партизанӗсемпе партизанкисем сывă пулччăр!

28. Нимӗçсен фашистла мерзавецӗсен пусмăрӗ айне вăхăтлăха лекнӗ пирӗн тăвансене — украинецсене, белоруссене, молдавансене, литовецсене, латышсене, эстонецсене, карелсене туслă салам! Тăвансем! Партизанла отрядсем тăвăр, тăшман войскисен тылне аркатăр, нимӗçсен фашистла вăрă-хурахӗсене пӗтерсе пырăр, эпир килессине кӗтӗр, эпир пыратпăр!

29. ССР Союзӗнчи граждăнсемпе гражданкăсене пурне те çар ӗçне вӗрентни пирӗн çӗршыв оборонине çирӗплетет. Совет патриочӗсемпе патриоткисем! Çар ӗçне вӗренӗр! Тăван çӗршыва хӳтӗлекен ăста çынсем пулма хатӗрленӗр!

30. «Хамăр пӗтӗм вăя пирӗн паттăр Хӗрлӗ Çара, пирӗн мухтавлă Хӗрлӗ флота пулăшма парар! Халăхăн пӗтӗм вăйне тăшмана аркатса тăкас ӗçе парар!» (Сталин).

31. Рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Фронта пулăшас тесе, канма пӗлмесӗр ӗçлӗр! Танксем, танксене хирӗç пемелли пăшалсемпе орудисем, самолетсем, тупăсем, минометсем, снарядсем, минăсем, пулеметсем, автоматсем, винтовкăсем ытларах туса парăр. Йăлтах фронт валли!

32. Рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Хальхи вăхăтри вăрçă вăл — моторсен вăрçи пулса тăрать. Самолетсем, танксем, автомашинăсем, карапсем валли çарпа флота ытларах моторсем туса парăр!

33. Колхозниксемпе колхозницăсем! Нимӗçсен мерзавецӗсем пирӗн çӗршыва, пирӗн тырпула тытса илесшӗн, помещиксен влаçне каялла тавăрасшăн, пире нимӗç князӗсемпе баронӗсен чури туса хурасшăн! Нимӗç пусмăрçисене аркатма Хӗрлӗ Çара пулăшăр! Фронта ытларах продовольстви парăр, пӗтӗм вăя фронта пулăшас, тăшмана аркатса тăкас ӗçе ярăр! Йăлтах фронт валли!

34. Чугунçул транспорчӗн работникӗсем! Войскăсене тата çар грузӗсене турттарса пыракан транспортсене хăвăртрах çӳретӗр! Сывă пулччăр пирӗн железнодорожниксем!

35. Совет интеллигенцийӗ! Хамăрăн пӗтӗм вăя тата пӗлӗве нимӗç захватчикӗсене хирӗç кӗрешес ӗçе парар!

36. Хӗрарăмсемпе хӗрсем! Арçынсен профессийӗсене вӗренсе пырăр, фронта кайнă арçынсен вырăнне йышăнăр!

37. Коммунистсемпе комсомолецсем! Нимӗçсен фашистла захватчикӗсене хирӗç кӗрешекенсен малти речӗсенче пулăр!

38. Сывă пултăр Пӗтӗм Союзри большевиксен коммунистла партийӗ, Ленин — Сталин партийӗ, нимӗçсен фашистла захватчикӗсене çӗнтерессишӗн пыракан кӗрешӗве организацилекенӗ!

39. Ленин—Сталин ялавӗпе малалла, нимӗç захватчикӗсене аркатса тăкма!

ПӖТӖМ СОЮЗРИ КОММУНИСТСЕН (большевиксен) ПАРТИЙӖН ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕЧӖ.

Паттăр воинсем валли парнесем

ШАМАРША. Тăван Хӗрлӗ Çар 24 çул тултарнă куна районри колхозсем çӗршыва, фронта пулăшас ӗçе вăйлатнипе кӗтсе илчӗç. «Красный пахарь» колхоз членӗсем, производствăра тăрăшса ӗçленипе пӗрлех, Хӗрлӗ Çара куллен, ӗçлӗн пулăшса тăраççӗ. Вӗсем çак юлашки вăхăтра паттăр воинсем валли çӗнӗрен 13 мăшăр çăматă, 134 тир, 7 çӗлӗк, 34 мăшăр пир тăла, 29 мăшăр чăлха, 7 килограмм çăм пухса пачӗç. Уйрăм колхозниксемпе колхозницăсем А. Чамеев—виçӗ тир, Е. Карзановăпа А. Чурбанов—икшер тир, ватă колхозница Александра Никифоровна Крикина—виçӗ тир тата пӗр мăшăр çăматă, А. Кузанов—пӗр килограмм çăм, Г. Драгунов—çыхнă çăм кӗпе тата алшăлли пачӗç.

Хӗрлӗ Çар 24 çул тултарнă ятпа «Красная нива» колхоз членӗсем фронтри боецсем патне яма 18 килограмм пыл, 5 пачка махорка, 3 килограмм табак хатӗрлерӗç тата 20 чăх пӗçерсе типӗтрӗç. Т. Базаров колхозник боецсем валли икӗ килограмм турттакан шăрттан, А. Тайруковăпа А. Молгачов колхозниксем—пӗрер килограмм пыл, А. Еливанова колхозница—пӗр чăх, Е. Богачова—пӗр хур пӗçерсе пачӗç.

Колхозниксемпе колхозницăсем отечественнăй аслă вăрçă фрончӗсенче пирӗн паттăр фронтовиксем пысăк çӗнтерӳсем тунипе савăнаççӗ. Çав çӗнтерӳсем татах та лайăхрах ӗçлеме хавхалантараççӗ. Колхозниксем Хӗрлӗ Çарăн паттăр воинӗсене мӗн кирлине пурне те çителӗклӗн парса тăма тăрăшаççӗ, тăван çӗршывăн ирӗклӗхӗшӗн, ырлăхӗшӗн хăйсен пӗтӗм вăйне параççӗ.

Нимӗç бандичӗсем пирӗн ирӗклӗ çӗршыва чуралантараймӗç, фашистла çăхансем хӗвел суттине хупăрлаймӗç. Совет Союзӗнчи халăхсем хăйсен чысне, ирӗкне, телейне, культурăллă пурнăçне, хăйсен ачисен аслă пуласлăхне çирӗппӗн хӳтӗлеççӗ, уншăн кӗрешекен паттăр Хӗрлӗ Çара вăйлăн пулăшаççӗ.

Ф. КРАСНОВ.

* * *

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Февралӗн 18-мӗшӗнче районри ӗççыннисем отечественнăй вăрçă фрончӗсенчи хӗрлӗ воинсем патне уяв ячӗпе 15 центнер сухари, 200 килограмм типӗтнӗ аш-какай, 17 килограмм çу, 157 килограмм махорка, 522 çăмарта, 22 килограмм пыл ярса пачӗç.

И. СИНДЮКОВ.

ОБОРОНА ХĂВАТНЕ ТӖРЕКЛЕТМЕ

ИШЛЕЙ. Тивӗш ялсоветӗнчи ӗççыннисем вăрçă вăхăтӗнчи налог çинчен кăларнă Указа хапăл туса йышăнчӗç. Ку налог Хӗрлӗ Çара татах та ытларах пулăшнине, çӗршыв оборонин хăватне тӗреклетме пулăшнине ӗççыннисем тӗплӗн ăнланса илнӗ. Çавăнпа та ӗнтӗ колхозниксем вăрçă вăхăтӗнчи налог укçине срокчченех тӳлесе татма тăрăшаççӗ.

Тивӗш колхоз членӗсем чылайӗшӗсем çӗнӗ налога срокчченех тӳлесе татрӗç. Сăмахран, М. Краснова, Л. Краснова, А. Димитриева, М. Осипова юлташсем тата «Авдан» колхоз членӗ М. Лесникова юлташ вăрçă вăхăтӗнчи налог укçине 175-шер тенкӗ тӳлерӗç.

Хӗрлӗ Çар 24 çул тултарнă тӗле колхозниксем вăрçă вăхăтӗнчи налог укçине тӳлесе татма уйрăмах çине тăраççӗ.

И. ВОЛКОВ.

Укçа-тенкӗ парăмӗсене васкасах татаççӗ

ÇӖРПӲ. Лӗпсер ялсоветӗнчи колхозсемпе колхозницăсем Хӗрлӗ Çар 24 çул тултарнă куна укçа-тенкӗ парăмӗсене парса татнипе кӗтсе илеççӗ. «Коснария» колхоз членӗсем В. Сидорова, А. Иванова, Е. Николаев, И. Захаров, С. Андреев тата ытти колхозниксем те вăрçă вăхăтӗнчи налога парса татрӗç. Çавăн пекех «Липсерия» колхоз членӗ А. Афанасьев, «Красная Армия» колхоз членӗ С. Артемьев юлташсем те вăрçă вăхăтӗнчи налога пӗр срокрах парса татрӗç.

Г. ПЕТРОВ.

Агитаторсем Хӗрлӗ Çар кунӗ умӗн

ÇӖМӖРЛЕ, февралӗн 18-мӗш. (Телефонпа). Хӗрлӗ Çар 24 çул тултарнă куна ӗçри пысăк çитӗнӳсемпе кӗтсе илме хатӗрленсе, агитаторсем колхозсемпе предприятисенче Хӗрлӗ Çарăн пурнăçӗпе паттăр ӗçӗсем çинчен калаçусемпе докладсем туса ирттереççӗ. Ку тӗлӗшпе районра халӗ 300 агитатора яхăн ӗçлет. Древкомбинатăн цехӗсенче кăна 55 агитатор Хӗрлӗ Çар çинчен калаçусем ирттерме тытăннă.

Райкомăн парткабинетӗнче докладчиксемпе агитколлектив руководителӗсен инструкциллӗ канашлăвӗ пулса иртрӗ. Унта парткабинет заведующийӗ Мосалов юлташ «Ленин—Сталин—Хӗрлӗ Çарăн организаторӗсем» темăпа доклад туса пачӗ. Парткабинет Хӗрлӗ Çарăн пурнăçӗпе геройла çапăçăвӗ çинчен калакан документсене пухса выставка организацилерӗ.

Х. ЛИСИН.

ВӖСЕМ ЕРТСЕ ПЫНИПЕ ХӖРЛӖ ÇАРПА ТИНӖС-ÇАР ФЛОЧӖН ЧАÇӖСЕМ ТĂШМАНА АРКАТАÇÇӖ

Ӳкерчӗк çинче: Хӗрлӗ Çар полководецӗсемпе флотсен командующийӗсен группи: аялти ретре (сулахайран) — армин генералӗ, Совет Союзӗн Геройӗ Г. К. Жуков, контр-адмирал А. Г. Головко, Совет Союзӗн Геройӗ тата Маршалӗ С. К. Тимошенко, генерал-лейтенант М. С. Хозин, армин генералӗ, Совет Союзӗн Геройӗ К. А. Мерецков, генерал-полковник Я. Т. Черевиченко. Çӳлти ретре—вице-адмирал Ф. С. Октябрьский, вице-адмирал Б. Ф. Трибуц, генерал-лейтенант К. К. Рокоссовский, генерал-лейтенант Л. А. Говоров, генерал-лейтенант И. В. Болдин, генерал-полковник И. С. Конев.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Февралӗн 20-мӗшӗнчи каçхи пӗлтерӳ

Февралӗн 20-мӗшӗнче пирӗн войскăсем, противника хирӗç вăйлă çапăçусем туса пырса, малалла кусна тата халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнӗ.

Февралӗн 19-мӗшӗнче сывлăшри çапăçусенче нимӗçсен 24 самолетне персе антарнă тата аэродромсем çинче 7 самолет пӗтерсе тăкнă. Пӗтӗмпе çав кун нимӗçсен 31 самолетне пӗтерсе тăкнă. Пирӗн 12 самолет пӗтнӗ.

* * *

Февралӗн 19-мӗшӗнче пирӗн авиацин чаçӗсем нимӗçсен 10 танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 470 автомашинине, боеприпассемпе войскăсем тиенӗ 300 лавне, 9 орудине, зенитнăй пулеметсен 5 точкине, 34 пулеметне, 68 минометне пӗтерсе тăкнă тата сиенленӗ, 33 орудине пусарса лартнă, чугунçул çинчи икӗ эшелона тата горючисен складне çунтарса янă, боеприпассен 2 складне взрыв туса сирпӗнтернӗ, чугунçул çинчи 57 вагона, 2 цистернăна тата 1 паровоза çӗмӗрнӗ, тăшманăн пехотине 4 батальона çити сапаласа янă тата пӗр пайне вӗлерсе пӗтернӗ.

* * *

Лысенко юлташ командир пулса ертсе пыракан чаçри боецсем 4 кун хушшинче нимӗçсен салтакӗсемпе офицерӗсене 800 çынна ытла вӗлерсе пӗтернӗ тата 17 пулемет, 3 миномет, 52 винтовка, 69 лаша, çар грузӗсем тиенӗ 37 лав, 80 велосипед, 2 кухня тата ытти çар пурлăхӗсене нумай тытса илнӗ.

* * *

Пирӗн 6 автоматчик Поляков сержант ертсе пынипе нимӗçсен обоз каялла чакакан çула тытса илнӗ те тăшманăн 12 салтакне вӗлернӗ тата 6 лав, 11 пулемет, 4 миномет, 6 ещӗк мина тытса илнӗ.

* * *

Кăнтăр фрончӗн участокӗсенчен пӗринче Р. пункчӗн районӗнче противникăн 20 офицертан тăракан, разведка тăвакан ушкăнне асăрханă. Старши лейтенант Зарудный тата снайпер-красноармеец Маматов юлташсем тӗл персе тăшманăн 16 офицерне вӗлернӗ.

* * *

Пирӗн чаçсем нимӗçсен 339-мӗш пехотнăй полкӗн аслă врачӗ нимӗçсен 167-мӗш пехотнăй дивизин командирӗ патне çырнă донесенине тытса илнӗ. Çав донесенире çапла каланă:

«Полкри офицерсемпе салтаксен сывлăхӗсене тӗрӗслесе тухнă хыççăн подразделенисенчи врачсем, пӗр-пӗринпе хутшăнса каласмасăрах, пурте çынсен вăй-халӗ çинчен пӗр пек вывод тунă.

ФИЗИЧЕСКИ ВĂЙ ЕНӖПЕ. Вăй-хал питӗ чакнă. Вăйсем пӗтсе çитнӗ. Унтер-офицерсемпе салтаксенчен 15 процентне кăна пӗтӗмпех сывă тесе шутлама пулать. 40 проценчӗ сывлăх енӗпе пӗтӗмпех йӗркере мар, анчах вӗсен вăйӗ пӗтӗмпех пӗтсе çитнӗ тесе те шутлама çук. Юлашки 45 проценчӗ вара вăрçă хăвăртрах пӗтессе кӗтсе чаçсем хыççăн сӗтӗрӗнсе кăна пырать. Апат-çимӗç йышăнакан органсен, сывламалли çулсен, пӳрессемпе хăмпусен чирӗ, урасем çинчи час тӳрленмен сурансем, тăм илтерни тата пыйтăсем офицерсем хушшинче те саралнă.

ПСИХИКАЛЛА СОСТОЯНИ ЕНӖПЕ. Унтер-офицерсемпе салтаксен шухăшкăмăлӗ пусăрăнчăк, питӗ хытă тарăхса çитни палăрать. Пыйтăсем кунта пысăк вырăн йышăнаççӗ.

Офицерсем сывлăх енӗпе салтаксенчен уйăрăлса тăмаççӗ. Офицерсем хушшинче те варвиттие, грипп чирӗсене, пыйтланса кайнине курма пулать.

Офицерсенчен чылайӗшӗн, çав шутрах батальон командирӗсен те, нерв системисем начарланнă. Çавăнпа та çапăçусен таткăлă вăхăтӗнче офицерсем кирлӗ пек чăтӗмлăх тупаймӗç. Çакă вăл питӗ пысăк хăрушлăх».

* * *

Смоленск облаçӗнчи Дзержинский районӗнчи ялсоветсенчи халӗ нимӗç захватчикӗсенчен ирӗке кăларнă 9 ялта, туллимар даннăйсем тăрăх, нимӗçсен фашистла бандичӗсем 2495 пурăнмалли çурта, 13 шкула тата ытти 27 çурта вут тивертсе çунтарса янă, 1013 хуçалăх çуртне çӗмӗрнӗ, ӗç выльăхӗсемпе килти выльăхсене нумай пӗтернӗ. 3 уйăх çурă иртнӗ хушăра фашистсем 247 арçынна, 27 хӗрарăма тата 14 ачана асаплантарса тата персе вӗлернӗ. Нимӗçсем каялла чакнă чухне мирлӗ гражданскене 262 çынна хăйсемпе пӗрле хăваласа кайнă.

* * *

Финсен резервистсенчен пухса тунă сапернăй батальонӗнчи салтаксем, Симов хули çывăхӗнчи бараксенче вырнаçнăскерсем, фронта каясси çинчен панă приказа пурнăçлассине хирӗç тăнă. Финн салтакӗсене пусарма нимӗçсен полкӗн пулеметнăй рота парса вăйлатнă батальоне чӗннӗ. Гитлеровецсем бараксене çавăрса илнӗ те вӗсем çине минометсемпе пулеметсенчен пеме тытăннă. Финн салтакӗсем хирӗç тăма пăрахсан, гитлеровецсем чӗрӗ юлнă финсене тискеррӗн асаплантарса вӗлернӗ.

* * *

«Азизбековнефть» трестӗнче (Баку) Хӗрлӗ Çара кайнă çынсен арăмӗсем, амăшӗсем, рабочисемпе служащисем 450 çын йывăр профессисене вӗренсе алла илнӗ. Вӗсем халӗ трестăн промыслисемпе предприятийӗсенче ăнăçлăн ӗçлеççӗ.

Февралӗн 21-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Февралӗн 21-мӗш ыран тенӗ чух çӗрле пирӗн войскăсем нимӗçсен фашистла войскисене хирӗç активлăн çапăçнă.

* * *

Миронов юлташ командир пулса ертсе пыракан пирӗн часть, противника хирӗç икӗ эрне хушши çапăçса, нимӗçсенне 4 самолет, 14 оруди, 16 пулемет, 3 миномет, 38 грузовой тата 13 çăмăл автомашина, 4 вездеход, 6 мотоцикл, 35 велосипед, снарядсем, патронсем тата ытти çар пурлăхӗсем нумай тытса илнӗ.

* * *

Ленинград фрончӗн участокӗсенчен пӗринче кӗрешекен пирӗн чаçсем юлашки кунсем хушшинче тăшманăн 49 ДЗОТ-не, 50 блиндажӗпе землянкине, 16 орудине, 6 станковăй пулеметне, минометсен батарейине пӗтерсе тăкнă. Çапăçусенче нимӗçсен 4 полевой орудине тата танксене хирӗç пемелли 15 туппине, 32 минометне, 60 пулеметне тата ытти трофейăсем нумай тытса илнӗ. Трофейăсем хушшинче—нимӗçсен полкӗн ялавӗ тата нимӗçсен полкӗн секретлă документсен сумки. Тыткăна илнисем пур. Противникăн салтакӗсемпе офицерӗсем 1200 çын вилсе пӗтнӗ.

* * *

Разведчиксем персе тăрса пулăшнипе красноармеец Пономарев юлташ тăшманăн блиндажӗ патне шăвăнса пынă та блиндажа минăсем хурса сирпӗнтерсе янă. Ишӗлнӗ блиндаж айӗнче нимӗçсен салтакӗсемпе офицерӗсем 15 çын пӗтнӗ.

* * *

Кăнтăр-Хӗвеланăç фрончӗн участокӗсенчен пӗринче отделени командирӗ Изотьев юлташ икӗ кун хушшинчи çапăçусенче, пулеметран тӗл персе, противникăн салтакӗсемпе офицерӗсене темиçе вуншар çынна пӗтерсе тăкнă. Капитан Орлов, противника хирӗç штык вӗççӗн çапăçса, 8 гитлеровеца вӗлернӗ.

* * *

Украинăн нимӗçсем оккупациленӗ районӗсенчен пӗринче Ч. юлташ ертсе пыракан партизансен отрячӗ хăюллăн та паттăррăн çапăçать. Нумаях пулмасть çав отрядри боецсем нимӗçсен пӗр чаçӗ каçхине канма вырнаçнă Б. ялӗ çине ăнăçлăн пырса тапăннă. Партизансем ял патне çитнӗ чухне виç-тăватшар çынран тăракан пӗчӗк ушкăнсене уйăрăлнă та нимӗçсем çине кӗтмен çӗртен пырса тапăннă. Нимӗç салтакӗсем вырнаçнă çуртсем çине гранатăсем пăрахнă. Гитлеровецсем хушшинче паника пуçланса кайнипе усă курса, партизансем тăшманăн салтакӗсемпе офицерӗсене 60 çынна ытла вӗлернӗ, тăшманăн обозне пӗтерсе тăкнă тата паха документсем хунă икӗ портфеле тытса илнӗ.

* * *

Нимӗçсен 183-мӗш пехотнăй дивизийӗн 330-мӗш полкӗнчи 5-мӗш ротăран тыткăна лекнӗ ефрейтор Фриц Шульц çапла каласа панă: «Январӗн 30-мӗш ыран тенӗ чух çӗрле 5-мӗш ротăн командирӗ обер-лейтенант Гельмбергер ротăна пухса тăратрӗ те, командованин приказӗ тăрăх пирӗн кирек мӗнле пулсан та Ш. ялне тытса илмелле, терӗ. Эпир яла илеймерӗмӗр. Пирӗн ротăна пӗтерсе тăкрӗç, пире чӗрӗ юлнисене 5 çынна вырăссем тыткăна илчӗç. Çапла майпа январӗн 30-мӗшӗнче 5-мӗш ротăран унăн мухтавсăр номерӗ кăна тăрса юлчӗ. Батальон питӗ пысăк çухатусем тӳснӗ. Батальонăн личнăй составӗнчен 30 проценчӗ те юлман».

* * *

Смоленск облаçӗнчи Дзержинский районри Малое Бальнтово ялӗнчен тухса кайнă чухне нимӗçсен фашистла мерзавецӗсем М. В. Малиничев инвалида тата унăн арăмне М. В. Милиничевăна, вӗсен ачисене: 10 çулти Ивана, 6 çулти Петӗре, çулталăк çурăри Владимира тата икӗ уйăхри Леонида нӳхрепе хупнă та вут тивертсе çунтарса янă. Нимӗçсен фашистла мерзавецӗсем тепӗр нӳхрепре Е. К. Родина колхозницăна, унăн амăшне 67 çулти Татьяна Авдеевăна, хӗрачине — 12 çулти Аграфенăна, ывăлне — 10 çулти Георгие, хӗрӗсене—8 çулти Анастасийăна, 6 çулти Аннăна тата икӗ çулти Анатолие чӗрӗллех çунтарса янă.

* * *

Оборона валли продукци туса кăларма тытăннă заводсенчен пӗринче çамрăксем Хӗрлӗ Çар кунӗ тӗлне планран ирттерсе икӗ машина туса кăларма обязательство илнӗ пулнă. Винокуров тата Нинуа юлташсем ертсе пыракан комсомолецсен бригади вăхăта пăхмасăр ӗçленӗ. Çамрăксем хăйсен обязательствине срокчен тултарнă. Халӗ вӗсем планран ирттерсе 3-мӗш машинăна туса çитерсе [illegible]

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

Тăшманăн хирĕç тăмалли вырăнне çапса аркатни

ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, февралĕн 20-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). В. ялне тăшман хирĕç тăмалли чи вăйлă вырăн туса хунă. Унта нумай тупăсемпе пулеметсем лартса тухнă тата оборонăллă сооруженисем нумай тунă.

Н-ски стрелковăй подразделенин командирĕ Терехов юлташ, разведка туса, вăрман сывăхĕнче тăшманăн качар хӳтĕленĕ вырăнне пырса тупнă. Унта неприятель артиллерирен тата минометсенчен персе тăма пултарайман. Пирĕн подразделенисен пĕтĕмĕшлĕ наступленине пулăшас тесе, Терехов юлташ тăшманăн качар çирĕплетнĕ вырăнĕпе усă курма васканă.

Кăнтăр енчен юр тăрăх утса пырса, Терехов юлташăн подразделенийĕ тăшманăн оборони çине сасăлланса кĕнĕ те нимĕçсем çине тăвăллăн вут-çулăм тăкма пуçланă. Тытăмăна лекнĕ нимĕçсем кайран каласа панă тăрăх, пирĕннисем çавăн пек пырса çапасси вĕсем пачах та кĕтмен. Вĕсем çине хăйсене пулăшма пырса çитнĕ подкреплени салтакĕсемех переççĕ пулĕ тесе шухăшланă вĕсем. Тăшманăн ушкăнне паникăна ӳкерсе, Терехов юлташ хăйĕн боецĕсене штыкпа тăрса çапăçма çĕкленĕ. Вĕсем противникăн оборонине татса кĕнĕ те нимĕçсен пехотин пĕр взводне ытла вĕлерсе пĕтернĕ тата 4 ручной пулемет, автоматсемпе винтовкăсем нумай тытса илнĕ.

Терехов юлташăн подразделенийĕ «Тăван çĕршывшăн! Сталиншăн!» тесе кăшкăрса атакăна ыткăнсан, ял патĕнчи позицие йышăнса тăракан пирĕн ытти подразделенисем те çапăçăва çĕкленнĕ. Тылран пырса çапнипе хавшаса ӳкнĕ тăшман çĕнĕрен, тӳрех çамкаран пырса çапнине тӳссе тăрайман, тарма тытăннă.

Терехов командир хăюллăн та пуçаруллăн кĕрешнипе пула противникăн В. ялĕнчи çирĕплетнĕ вырăнне çапса аркатнă. Çапăçу хирĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 200 виллине ытла вырттса юлнă. Пирĕн боецсен аллине пушан трофейăсем, вăл шутра танксене хирĕç перемелли 2 тупă, пĕр йывăр оруди, çĕршер снаряд, нумай пулеметсемпе автоматсем, пиншер патрон тата ытти тĕрлĕ çар хатĕрĕсем чылай лекнĕ.

И. ГРИБОВ.

Минометчиксен ĕçĕ

КĂНТĂР ФРОНЧĔ, февралĕн 19-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Пирĕн паянхи партин пухăвĕн кун йĕркинче пĕр ыйту — партие илесси,—тенĕ пуху председателĕ.— Степан Порфирьевич Галкинăн заявленине пăхса тухар.

Наводчик Галкин хăйĕн автобиографине каласа та пĕтереймен,—инçех те мар вичĕ мина шартлатса çурăлса кайни илтĕннĕ.

— Çапăçăва!—тесе кăшкăрнă дивизион командирĕ. Коммунистсем пĕр самантра хăйсен минометĕсем патне чупса тухса кайнă. Сывăхра тепĕр мина çурăлса кайнă, унтан татах тепĕре...: Нимĕçсем çулсем юпленсе кайкан вырăна тĕл лектерес тесе пенĕ. Унта пирĕн боецсем пĕр грушши окопсем чавса вырнаçса вырттнă. Тăшманăн батарейине çийĕнчех сивсĕрлетмелле пулнă. Старши лейтенант Иванников наблюдательнăй пункт патне чупса кайнă. Унта наблюдательсем-связистсем ларнă.

— Аçтан переççĕ!—тесе ыйтнă Иванников.

— Чăх-чĕп ферминчен пулас,—ответленĕ Никонов сержант.

Иванников стериотрубапа пăхнă. Тĕрĕс! Фашистсен миномечĕсем чăх-чĕп фермин кыçăнчи айлăмран, пĕр 4 километр инçĕшĕнчен переççĕ. Темиçе минутăран Барановский телефонист противник позицийĕ çинчен сведенисем панă. Пирĕн минометсем тапçанах хатĕр тăнă. Малтан, тĕрĕслесе пăхас тесе, Скрипкинпа Лукьянов наводчиксем персе янă. Мина кăпит аякран пырса ӳкнĕ. Залп!—тесе команда панă командир. Минăсем тĕл пырса ӳкнĕ. Халĕ ĕнтĕ пĕтĕм дивизионĕпе пĕрле пенĕ, минометчиксем хăвăрт тата тĕл персе ярас тĕлĕшпе пĕр-пĕринпе ăмăртнă. Противник ĕнтĕ тапçанах пеми пулнă. Ку вăл — маневр мар. Иванников дивизионĕ противник йышăнса тăракан пысăк мар вырăнах 40 мина кăларса янă. Ку вăл противникăн пĕтĕм батарейине пĕтерсе лартма ытлашшипех çителĕклĕ.

Çур сехетрен коммунистсем малалла блиндажа пухăннă. Старши политрук Костеневич каланă:

— Галкин юлташ, хăвăн биографийне малалла кала...

Пуху Галкин, Скрипкин тата Ямщиков наводчиксене тата Обухов сержанта партие илнĕ.

А. МАЛИБАШЕВ.

Артиллерин орденлă чаçĕ

ФРОНТĂН (КРЫМРИ УЧАСТОКĔ), февралĕн 20-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Богданов юлташ командир пулса ертсе пыракан чаçри артиллеристсем Севастопольне паттăррăн хӳтĕлекенсем хушшинче палăрса мухтава тухнă. Нумаях пулмасть СССР Верховнăй [illegible]

са тапăннă. Анчах маскировка туса лайăх пытарнă совет тупăсене нимĕçсем те хупласа лартайман. Тăшман пĕтĕ вăйлăн персе тăнă пулин те, пирĕн артиллеристсем тăшмана хытăрах та хытăрах аркатса пынă. Тăшманăн танкĕсем батарея патнех çывхарса [illegible]

М. ТУРОВСКИЙ.

Çапăçури ăмăрту

КĂНТĂР-ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, февралĕн 20-мĕш. (ТАСС). [illegible]

Гитлеровецсем хăйсем оккупациленĕ çĕршывсене çаратаççĕ

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 19-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсене пырса тăракан сведенисем гитлеровецсем хăйсем оккупациленĕ çĕршывсене ытларах та ытларах эксплоатациленни çинчен, çаратни çинчен калаçса параççĕ. «Крисчен сайенс монитор» хаçат çапла кăтартса парать: гитлеровецсем хăйсем оккупациленĕ çĕршывсенче чĕртавартăн, машинăсемпе оборудованипĕн, продовольствипĕн, час-часах предприятисемпĕн те, хăйсен нимĕне те тăмаан укçисене параççĕ, çапла вара Европăри хăйсем оккупациленĕ çĕршывсенчи промышленноçпа суту-илӳн шутра предприятийĕсене тĕрĕслесе пырас ĕçе пĕтĕмпех хăйсен аллине илеççĕ. Çав çĕршывсене нимĕçсем çаратса юхăнтарнă пирки, тавар хакĕсем унта çавтери ӳссе кайнă, спекуляципе выçлăх хăрушла сарăлнă. Нимĕçсем поляксене шамалла тунă продовольстви уйăхри норми вăрçăччен тĕрмере ларакан поляксене панă апат-çимĕç паекĕн чĕрекĕ чухлĕ çеç. Польшăра тавар хакĕсем çавтери ӳснĕ пулин те, гитлеровецсем поляксен фирмисене Польша рабочийĕсем валли ĕç укçи хушма ирĕк памаççĕ. Польша рабочийĕсен делегацийĕ ĕç укçи тĕлĕшпе ĕçлекен гитлерла чиновник патĕнче пулнă чухне çак чиновник нимĕçсен фашистла сĕмсĕрлĕхĕпе çапла ответ панă: «Халăхи вăхăтри ĕç укçи хисепĕ ирĕклĕ çынсемшĕн сахал, анчах чурасемшĕн çак ĕç укçи те ытлашши»,—тенĕ.

Поляксем выçăпа вилсе пынă вăхăтрах, нимĕçсем тырпул усрамалли складсем çителĕклĕ тăвайман пирки, вăйпа конфискацилесе пухнă темĕн чухлĕ тырпул çĕрсе выртать.

Голландецсен Нью-Йоркра тухса тăракан официальнăй органĕ çапла пĕлтерет: Голландие нимĕн хĕрхенӳсĕр эксплоатацилесе усламсем илнипе Германири хаçатсем уççăнах мухтанаççĕ. Гитлерăн Голландири наместникĕ Зейсс-Инкварт «Фелькишер беобахтер» хаçатра пичетлесе кăларнă хăйĕн статьинче çапла çырнă: Голландире «таварсемпе апат-çимĕçе мĕнле тыткаланине контроль туни» Голландин чылай материлĕсемпе Германие вăрçă ĕçĕнче усă курма май панă. Зейсс-Инкварт кăтартса панă тăрăх, 1942 çулта нимĕçсем Голландирен 400 пин тонна пахча-çимĕç илсе тухаççĕ. Халăхи вăхăтра Голланди промышленноçĕ Германи промышленноçĕн пайĕ пулса тăрать, тесе çырать Зейсс-Инкварт хăйĕн статьинче. Голланди рабочийĕсене 200 пин çынна вăйпах Германири предприятисенче ĕçлеме илсе кайнă.

Юнайтед пресс агентстви Анкараран пĕлтернĕ тăрăх, Грецири выçлăх çавтери вăйланса кайнă. Афинăра кашни кунах çĕршер çын выçăпа вилет.

Юнайтед пресс агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ çапла хыпар парать: дипломатиллĕ çынсем пĕлтернĕ тăрăх, Германире, вăл хăй оккупациленĕ çĕршывсене çаратнă пулин те, апат-çимĕç запасĕсем халăха çурма выçă тытса усрама та çителĕклĕ мар.

Францин шалти йывăрлăхĕсем вăйланса пыни

СТОКГОЛЬМ, февралĕн 19-мĕш. (ТАСС). «Стокгольмс тиднинген» хаçатăн корреспонденчĕ Виширен çапла пĕлтерет: Францин оккупацилемен зонинче шалти лару-тăру питех те çивĕчленсе çитнĕ. Виши правительстви питĕ йывăр испытани умĕнче тăрать. Продовольстви тĕлĕшпе лару-тăру вĕçнех çитнĕ. Васкавлă мерăсем йышăнмасан, хăрушă выçлăх пуçланса кайма пултарать. Снабжени министрĕ уççăнах çапла каланă: выçăхса пурăнни халăхăн сывлăхне вăйлах хавшатса ячĕ, тенĕ. Кăнтăрти Францире вырăнти халăх чылаях пысăк демонстрацисем туса ирттернĕ. Çав демонстрацисене полици вăйпа пусарса лартнă. Шалти лару-тăру хăвăртăн çивĕчленсе пырать, малашлăх кунта пысăк хăрушлăх умĕнче тăрать; çав хăрушлăх çинчен калаçма никам та хăяймасть, вăл хăйĕн йывăрлăхĕпе пурне те хăратса ӳкернĕ. Виши правительствине Германия хĕсни вăйланса пырать. Нимĕçсем Виши правительствинчен Франци флотне тата Африкăри базăсене Германие пама çине тăрсах ыйтаççĕ.

Францири забастовкăсем

ЛОНДОН, февралĕн 19-мĕш. (ТАСС). «Дейли мейл» хаçатăн Мадридри корреспонденчĕ çапла çырать: Çурçĕр Францири çĕркăмрăк шахтисенче чылай забастовкăсем пулса иртнĕ. Шахтерсем кунти çĕркăмрăкне Германин çар промышленноçĕ валли ĕçлекен металлурги заводĕсене янине хирĕç протестлеççĕ.

Акгли самолечĕсем Рур çине вĕçсе пырса тапăнни

ЛОНДОН, февралĕн 20-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 20-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле бомбардировщиксен пысăк мар соединенийĕсем Рур çине вĕçсе кайса чылай объектсене атакăланă. Самолетсем хăйсен базине пурте тĕрĕс-тĕкĕлех таврăннă.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

СОЮЗНИКСЕН ВЕРХОВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

БАТАВИЯ, февралĕн 20-мĕш. (ТАСС). Союзниксен Лăпкă океанри Кăнтăр-Хĕвеланăç пайĕнчи пĕрлешӳллĕ командованийĕ кăларнă коммюникере çапла каланă: союзниксен сывлăшри вăйĕсем февралĕн 18-мĕшпе 19-мĕш числисенче Сурабаяна (Ява) атакăлакан Японин авиацине хирĕç çапăçнă. Çапăçусенче японецсене пилĕк бомбардировщик тата 5 истребитель персе антарнă. Кунсăр пуçне союзниксен авиаци соединенийĕсем Яварăн хĕвелтухăçнерех выртакан Бали утравĕ сывăхĕнче Японин суднисене атакăланă чухне татах 4 истребитель персе антарнă. Суднăсене атакăланă чухне Японин пĕр крейсерне виçĕ бомба тĕл пырса тивнине палăртнă. Транспортсене тăватă бомба тĕл пырса тивнине палăртнă тата 8 бомба авианосец сывăхĕнче çурăлса кайнă. Çавăн пекех чылай пысăк бомбăсем пĕр крейсера тата транспорт суднине тĕл пырса лекнине палăртнă. Çав операцирен союзниксен пур самолечĕсем те пĕр сиенленмесĕрех таврăннă.

АМЕРИКА ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 20-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен çар министерстви кăларнă коммюникере çапла каланă: çапăçусем Батаан çурутравĕ çинчи (Лусон утравĕ) фронтра мĕнпур таккăшĕпех пыраççĕ. Япони самолечĕсем Америкăла Филиппин войскисен тылĕнчи сооруженисене атакăласа вут хыптаракан бомбăсем нумай пăрахнă.

АНГЛИ ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

ЛОНДОН, февралĕн 20-мĕш. (ТАСС). Англин Рангунри командованийĕ кăларнă коммюникере çапла каланă: февралĕн 19-че Англин бомбардировщикĕсемпе истребителĕсем темиçе хутчен те Японин Бирмăри позицийĕсене атакăланă. Çавăн пекех тата Англин самолечĕсем Японин Билинг юхамывĕ районĕнчи силечĕсемпе транспорт колоннисем çине бомбăсем пăрахнă. Кунсăр пуçне Англи авиацийĕ противникăн территорийĕ çинче яланхи разведкăллă вĕçевсем тунă. Бирма территорийĕ çинче паян Японин авиацийĕн активлăхĕ малтанхи пек вăйлах пулман.

АВСТРАЛИ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 20-мĕш. (ТАСС). Австрали командованийĕ кăларнă коммюникере çапла каланă: ĕнер Японин авиацийĕ Дарвин хули çине (Австралия) икĕ хутчен вĕçсе пырса тапăннă, хăшпĕр ишĕлӳсем пур, анчах та чи кирлĕ сооружениссене сиен кӳмен. Хулари граждăнла халăх хушшинче 3 çын вилнĕ. Аэродром çинче пысăках мар материальнăй сухатусем пур. Аэродром персоналĕ хушшинче — вилнисемпе аманнисем тăватă çын.

ГОЛЛАНДИ ИНДИЙĔН КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

БАТАВИЯ, февралĕн 20-мĕш. (ТАСС). Голланди Индийĕн командованийĕ кăларнă коммюникере çапла каланă: ĕнер Японин авиацийĕ Ява утравĕн хăшпĕр районĕсем çине вĕçсе пырса тапăннă. Пысăк ишĕлӳсем çук. Вилнисем темиçе çын шутланаççĕ. Çавăн пекех тата Бультензорг сывăхĕнчи (Явăн хĕвеланăç пайĕнче) аэродрома та атакăланă. Голланди Индийĕн икĕ истребителĕ пĕтнĕ, анчах та пилотсем иккĕшĕ те хăтăлса юлнă, вĕсем кăшт кăна аманнă. Голланди Индийĕн истребителĕсем японецсенне икĕ самолет персе антарнă. Çавăн пекех тата Японин самолечĕсем Бандунг сывăхĕнчи аэродром çине те тапăннă. Голланди Индийĕн икĕ самолечĕ пĕтнĕ. Японецсем пĕр самолет çухатнă. Япони войскисем Бали утравне йышăнма пултарнине шута илсе, утрав çинчи чи кирлĕ объектсене пурне те çĕмĕрсе тăкнă. Японин десант чаçĕсене хирĕç Голланди Индийĕн войскисем вăйлăн çапăçнă.

ЯПОНИ ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

ТОКИО, февралĕн 20-мĕш. (ТАСС). Официальнăй сведенисем тăрăх, февралĕн 19-мĕшĕнче Японин самолечĕсем Бультензорг сывăхĕнчи аэродром çине вĕçсе пырса тапăннă. Çав кунах Дарвин хули çине те (Австралия) бомбăсем пăрахнă. Февралĕн 20-мĕшĕнче Японин войскисене Тимор утравĕн Португали пайĕнче антарса хăварнă.

Японипе Китай вăрçи

Китай войскисем февралĕн 17-мĕшĕнче Хубэй провинцин кăнтăр пайĕнче Дашапина (Туэтенрен çурçĕреллерех) йышăннă. Хэнань провинцин çурçĕр пайĕнче Япони войскисем февралĕн 19-мĕшĕнче китаецсен позицисене атакăланă, анчах та Китай войскисем вĕсене хирĕç питĕ вăйлăн тăнă. Япони войскисем, пысăк çухатусем тӳссе, каялла, малтанхи рубежа, чакнă. (ТАСС, февралĕн 20-мĕш).

Хулана ялхуçалăх продукчĕсем паратпăр

СĔНТĔР. Пирĕн геройла Хĕрлĕ Çар вăрçă фрончĕсенче пысăкрах та пысăкрах çĕнтерӳсем туса пырать, нимĕç оккупанчĕсене сывлăш çавăрма памасăр хăвалать. Анчах тăшманăн халĕ те вăйĕ пысăк-ха. Тăшман хăйĕн вилес сехечĕ сывхарса килнĕçемĕн татах та тискертерех ĕçсем тума пăхать. Çавăнпа ирсĕр нимĕç оккупанчĕсене тĕпĕ-йĕрĕпех пĕтерсе тăкма пирĕн хамăрăн Хĕрлĕ Çара татах та вăйлăнрах пулăшмалла, унпăн татах та тимлĕнрех, ырми-канми ĕçлемелле.

Сталин юлташăн кăтартăвĕсене пирĕн «Çĕнĕ Юнга» колхоз чыслăн пурнăçа кĕртсе пырать. Колхоз иртнĕ çул вăйлă тырпул, пахча-çимĕç туса илчĕ. Ана тирпейлĕн пухса кĕртессишĕн колхозниксем ывăнма пĕлмесĕр тимлĕн ĕçлерĕç. Вăрçă обстановкине ăнланса илсе, пур ĕçе те хастаррăн туса пычĕç. Государство умĕнчи обязательствăсене, финанс планне—пурне те ăнăçлăн пурнăçларăмăр.

Колхоз оборона фондне чылаях тĕпшырă пачĕ, ытлашши тырра государствăна кооперации урлă сутрĕ. Колхозниксем Хĕрлĕ Çар воинĕсем валли ăшă кăмăлтан парнисем, ăшă тумтирсем ярса параççĕ.

Хĕрлĕ Çар воинĕсене куллен пулăшса пынипе пĕрлех, пирĕн колхозпа колхозниксем хулари промышленность предприятийĕсенче ĕçлекен рабочисем валли те хула базарне пахча-çимĕçсем, çăнăх, пăрçа-ясмăк, сĕт-çу тата ыт-какай ытларах илсе тухса сутма пулчĕç.

Пирĕн фабрикăсемпе заводсем фронт валли ĕçлеççĕ. Фронт ыйтнине пурнăçлас тесе рабочисем кунĕн-çĕрĕн ывăнма пĕлмесĕр тăрăшаççĕ. Вĕсем валли апат-çимĕç продукчĕсем тăратасси—колхозниксен чыслă ĕçĕ. Çакна шута илсе, колхоз, вăрлăх тата ытти фондсене çителĕклĕ тăрăн уйăрса хунине тĕрĕслесе тухнă хыççăн, государство поставкисене татнă тата колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх валеççе панă хыççăн, ытлашши юлнă ялхуçалăх продукчĕсене хулари предприятисенчи рабочисене сутма тытăнчĕ. Çапла, çитес кунсенче колхоз хулана илсе тухса 2 сысна, 50 центнер çĕрулми, пĕр центнер сухан, 1000 литр сĕт сутма палăртрĕ.

Е. САЛДАКЕЕВ.
«Çĕнĕ Юнга» колхоз председателĕ.

ГОСУДАРСТВĂНА ТЫРĂ СУТАÇÇĔ

ВĂРМАР. Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче Хĕрлĕ Çар çитĕнӳсем туса пыни колхозниксене хавхалантарать. Вĕсем татах та лайăхрах тăрăшса ĕçлеççĕ, фронтра çĕнтерӳсем тумашкăн Хĕрлĕ Çара ытларах та ытларах пулăшаççĕ.

Юлашки вăхăтра колхозсенче государствăна тыră сутас ĕç вăйланчĕ. Кашни колхоз, кашни колхозник хăйĕн ытлашши тыррине кооператив урлă государствăна сутать. «Арапуç» колхозра çак ыйтупа ятарласах колхозниксен пухăвĕ пулса иртрĕ. Колхозниксем пурте хăйсен ытлашши тыррисене государствăна сутма пулчĕç. Ку таранччен колхозĕпе пурĕ 102 центнер тыră сутнă та ĕнтĕ. Колхозниксенчен Малахиев, Степанов юлташсем 50-шар килограмм сутрĕç.

Ытти колхозсенче те государствăна тыră сутас ĕç аван пулса пырать. «Большевик» колхоз колхозникĕсем пурĕ 160 центнер, «Маяк» колхозра — 155 центнер тыră сутрĕç.

Çак паха ĕç малалла та пулса пырать. Йăлтах фронтшăн, çĕнтерӳшĕн, тенĕ лозунг тивĕçлĕн пурнăça кĕрет.

Г. ФЕДОРОВ.

* * *

КАЛИНИНО. Государствăна тыră сутас ĕç районра анлăн сарăлса пырать. Юлашки кунсенче Ермошкăри Калинин ячĕпе тăракан колхозри колхозниксем 150 центнер, Çĕньял Явăшри колхозра 80 центнер сутрĕç. Ытти колхозсенче те колхозниксем çавăн пекех хăйсен ытлашши тыррине государствăна сутаççĕ.

Б. ШОРНИКОВ.

КАНАШ. («Чăваш Коммуни» корреспонденчĕ). Райпотребсоюзăн хатĕрлев контори государствăна кооператив урлă тыră сутас ĕçе лайăх организациленĕ. Иртнĕ уйăхра вăл ку тĕлĕшпе районри пур колхозсемпе те договорсем туса çитерчĕ. Договорсем тăрăх районĕпе государствăна кооператив урлă пурĕ 2.100 центнер тĕштырă сутма килĕшнĕ. Вăл шутран Сиккассинчи Шмидт ячĕпе тăракан колхоз 129 центнер, Асхвари «Хĕрлĕ хĕм» колхоз 88 центнер, Вăтакас Татмăшри Чкалов ячĕпе тăракан колхоз 60 центнер сутма пулнă.

Кооперации урлă тырпул илес ĕçе районри сельпосенчен Шăкăл сельповĕ ăнăçлă туса пырать. Вăл хăйĕн участокĕнчи колхозсемпе пурĕ 219 центнерлăх договорсем тунă.

Ытлашши тырпула государствăна сутас ĕçре уйрăмăнах Маякри «Çĕнĕ пурнăç», Пĕрщеверти «Соревновани» тата Воронцовкăри «Акатуй» колхозсем пример кăтартаççĕ. Вĕсем государствăна сутнă тырра Канаша леçсе панă та ĕнтĕ.

Т. ИВАНОВ.

* * *

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Государствăна тыră сутас ĕçре комсомолецсем малта пыраççĕ. Вĕсем çак ĕçе пуçарса ячĕç. Комсомолăн «Красный Восток» колхозри пуçламăш организацийĕн секретарĕ Тимофеев юлташ государствăна чи малтан хăй пĕр центнер тыră сутрĕ. Çавăн пекех, Войков ячĕпе тăракан колхозри Димитриев комсомолец та пĕр центнер тыră сутма пулчĕ. Вĕсем хыççăн государствăна ытти колхозниксем те тыră активлăн сутма пуçларĕç.

Я. Н.

Кросс мартăн пĕрремĕшчен пырать

Профсоюз членĕсемпе комсомолецсен Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа пулакан йĕлтĕрлĕ кроссне ирттерес тĕлĕшпе тунă Центральнăй Оргкомитет, облаçсенчи оргкомитетсем ыйтнипе килĕшсе, мартăн 1-мĕшне кросăн юлашки кунĕ тесе йышăннă.

Комсомол тата профсоюз организацийĕсене мартăн 1-мĕшĕнче чи лайăх йĕлтĕрçĕсен, командăсен массăллă ăмăртăвĕсене, физкультурниксен праçникне туса ирттерме хушнă.

Çамрăк выльăхсем хисепре

ШĂХАСАН. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе тухăçлă ĕçленĕшĕн районра 81 колхозника ĕçшĕн хушса тӳлеççĕ. Çакă вăл пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре пысăк çитĕнӳсем туни çинчен калать. Иртнĕ çулта пирĕн колхозсем çамрăк выльăхсене пăхса çитĕнтерес ĕçре уйрăмах пысăк çитĕнӳсем турĕç. Шоркассинчи «Большевик» колхозри сысна фермине ĕçлекен Е. Афанасьев 88 сысна çури пăхса çитĕнтерес вырăнне пĕтĕмпех 127 çурă пăхса çитĕнтерчĕ. Çак 9 çурăшăн ăна хушса тӳлерĕç.

Çавăн пек паха тĕслĕхсем татах та нумай кăтартса пама пулать. Атнашри Киров ячĕпе тăракан колхозри П. Волкова Уяншкарти Калинин ячĕпе тăракан колхозри Г. Кушаков юлташсем 25-шер тиха пăхса çитĕнтерес вырăнне 36-шар тиха пăхса çитĕнтереççĕ.

Çамрăк выльăхсене лайăх пăхса çитĕнтерни май нумай колхозсем хăйсен выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планĕсене тултарчĕç, выльăхсен продуктивноçне те чылай ӳстерчĕç. Ку тĕлĕшпе те районри колхозсенче паха тĕслĕхсем çĕршерĕн тупма пулать.

С. ШАДИН.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ТРЕБУЮТСЯ ДЛЯ РАБОТЫ
В ГОРОДЕ ЧЕБОКСАРАХ

проектировщики, инженеры и техники-строители, сантехники и энергетики, а также чертежники-копировщики.

С предложением обращаться письменно: почтовый ящик № 4 и по телефону № 5—29.
3—2 Дирекция.

ЧЕБОКСАРСКОМУ ЛИКЕРО-ВОДОЧНОМУ ЗАВОДУ

требуются

на постоянную работу: опытный тракторист, механик по двигателю внутреннего сгорания, бондари, возчики, кочегары, чернорабочие, работницы.

Оплата сдельная.

С предложениями обращаться: Чебоксарский ликеро-водочный завод, ул. Чувашская, № 65, к главному инженеру.
5—1

Заводу требуются:

инженеры, техники-конструкторы и техники по холодной обработке металла, экономисты, плановики, нормировщики, стеклографист, инженер-электрик-монтажник.

Рабочие следующих специальностей:

токари, фрезеровщики, строгальщики, слесари, сверловщики, электро-монтеры, шлифовщики, заточники, шоферы 1 и 2 класса, электро-слесарь по автоделу, жестянщики, литейщики, модельщики, сварщики, прессовщики, штамповщицы, зачистчицы, намотчицы, машинист копра, рессора, наборщик типографии, гальваники, слаботочники, радист, ящечники-упаковщики, плотники, столяры, каменщики, шорник, возчики, печник, дворники, уборщицы, кочегары-истопники и подсобные рабочие.

Грузчикам и возчикам предоставляются общежития.
Вахтеры-охранники с зарплатой до 300 руб. в месяц.

ОБРАЩАТЬСЯ: Отдел кадров, — Ленинградская ул., дом № 38, после 12 часов дня.
2—2

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, «Ленин çулĕпе» журналăн пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 58 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 268. [illegible]